## Ĕç чĕрĕкĕн итогĕсем

# Ачасен тӳпи пĕчĕк мар

***Чĕпсĕне кĕркунне шутлаççĕ, теççĕ те халăхра, çав тапхăр пирĕн ума та çитрĕ. Апла пулсан шкул ачисен ĕçĕсене те пĕтĕмлетер. Никамшăн та вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, ял хуçалăх аталанăвĕнче, шкул ĕçĕ-хĕлĕнче çамрăк ăрăвăн тӳпи те самай пысăк. Пĕрремĕш шăнкăрав шкула йыхравларĕ те ав темиçе кунтанах вĕсем уй-хире тухрĕç. Çуллахи каникул кунĕсене те усăсăр иртмерĕç: лагерьсенче сывлăхĕсене çирĕплетрĕç, канăва тĕрĕс йĕркелерĕç, çав хушăрах пӳлме çӳлĕкĕсене те самай пуянлатрĕç. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕнрех паллаштарма эпĕ район администрацийĕн вĕрентӳпе çамрăксен политикин, физкультурăпа спорт пайĕн ертсе пыракан специалистĕнчен Т.В. ЕГОРОВАРАН ыйтрăм.***

– Чăн та çамрăк ăрăвăн пурнăçне интереслĕрех, тавракурăмне анлăрах тăвас, вĕсене усăллă ĕçе явăçтарас тесе чылай тăрăшатпăр. Çавна май район администрацийĕн пуçлăхĕн 143 номерлĕ постановленийĕпе килĕшӳллĕн çу кунĕсенче шкулсенче ĕçпе кану лагерĕсене ĕçлеттерсе ярассипе тимлерĕмĕр, ятарлă комисси йĕркелерĕмĕр.

Çуллахи каникул вăхăтĕнче 21 шкулта ĕçпе кану лагерĕ ĕçлерĕ, унта 605 ача çӳрерĕ. 26 шкулта шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерь йĕркеленчĕ, унта 700 ача явăçрĕ. Профиллĕ лагерьсем 13 шкулта ĕçлерĕç, 225 вĕренекен тавракурăмне анлăлатрĕ.

Муркашри социаллă пулăшу паракан центр урлă 210 вĕренекен Москакассипе Чуманкасси шкулĕсен лагерĕсенче хăйсен канăвне йĕркелерĕç.

Ачасен канăвне туллин йĕркелеме социаллă страховани фончĕ 558500 тенкĕ, вырăнти бюджет 200000 тенкĕ, Муркашри социаллă пулăшу паракан центр 167580 тенкĕ укçа уйăрчĕ. Вĕсене икĕ хутчен вĕри яшка çитерчĕç.

Июнĕн 15-мĕшĕнче Муркаш шкулĕн стадионĕнче ĕçпе кану лагерĕсен тата çамрăксен ĕç ушкăнĕсен районти 3 спартакиади пулса иртрĕ. Унта 18 ушкăн хутшăнчĕ, Чуманкассипе Нискассисем малти вырăна тухрĕç.

Шкул ачисем тăрăшнипе калча, улма-çырла, пахча çимĕç ӳстернĕ, вĕсене сутса 104571 тенкĕлĕх тупăш курнă. Ӳстернĕ, пухса илнĕ продукцирен тунă тупăш вара пĕтĕмĕшле 1043990 тенкĕпе танлашать. Çавăн пекех çĕре арендăна панăран 102720 тенкĕ тупăш илнĕ.

Вĕсем пӳлмесене самай пуянлатни курăнать. Çăкăр пĕçерме 7750 килограмм тĕш тырă хатĕрленĕ, 167142 килограмм çĕр улми, 298 килограмм ыхра, 2808 килограмм помидор, 14300 килограмм кишĕр, 6544 килограмм хăяр, 22520 килограмм купăста, 12957 килограмм хĕрлĕ кăшман, 144 килограмм симĕс сухан, 5330 килограмм пуçлă сухан, 19610 килограмм пан улми, 820 килограмм çырла янтăланă. Унсăр пуçне 4532 килограмм хăяр тăварланă, 50 килограмм хăяр маринадланă, 654 килограмм помидор тăварланă, 395 килограмм яшка приправи, 610 килограмм пан улми типĕтнĕ, 1716 килограмм повидлăпа варени, 120 килограмм соус хатĕрленĕ. 46 тонна утă çулса типĕтнĕ. Куратăр ĕнтĕ, еплерех маттурсем пирĕн вĕренекенсемпе вĕрентекенсем.

Лагерьсенчи ĕç-хĕле хаçатра туллин çутатса тăрас енĕпе вĕрентӳ учрежденийĕсем хушшинче ятарлă конкурс йĕркелерĕмĕр. Москакасси шкулĕ çĕнтерӳçĕ пулчĕ, конкурсăн "Ылтăн калем – 2007" кубокне çĕнсе илчĕ.

Чи малтанах лагере сахал тупăшлă, тулли мар çемьесенчи ачасене, тăлăх ачасене явăçтарма, вĕсене валли кирлĕ условисем туса пама тăрăшнă.



Паллах, лагерь пурнăçĕ канупа кăна иртмест. Унта çӳрекенсем ял хуçалăхĕнче пулăшрĕç, шкул пахчисенче тăрăшрĕç, эмел курăкĕсем пухрĕç тата ытти усăллă ĕç пурнăçларĕç. Çапла вара вĕсем вăхăтпа туллин усă курчĕç.

Лагерьсен ĕç-хĕлне йĕркелеме тата пĕтĕмлетме ятарлă комисси ĕçлерĕ. Унăн ертӳçи район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культурăпа архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева пулчĕ. Комисси хăйĕн ĕçлĕ ларăвĕсене тăватă хут ирттерчĕ, сӳтсе явмалли сахал мар пулчĕ. Палăртса хăвармалла, лагерь ертӳçисем пурте яваплăха туйса ĕçлерĕç, ачасене тĕрлĕ енлĕ интереслентерме, хавхалантарма пултарчĕç. Вĕсен ĕçне вара комисси пĕтĕмлетрĕ, тĕрлĕ номинацисенче мала тухакансене палăртрĕ. Манăн çĕнтерӳçĕсене ятранах асăнса хăварас килет. Ĕçпе кану лагерĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăна Юнкăсем тивĕçрĕç. Профильлĕ лагерьсем хушшинче Нискасси лагерĕ палăрчĕ. Шкул çумĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсем хушшинче Тойкилтĕсем маттуртарах пулчĕç. Вĕрентӳпе ĕç бригадисен хушшинче Москакасси шкулĕ малти вырăна тивĕçрĕ. Юсав бригадисем тĕлĕшпе Орининсем палăрчĕç. Çатракасси шкулĕ те вăрман хуçалăхĕн ĕçне аван йĕркеленĕ курăнать. Чăн-чăн çут çанталăк тусĕсем вара Панклисем пулчĕç. Лагерьсен ĕç-хĕлне ятарлă альбомра çутатас енĕпе Шомиксем палăрчĕç. Лагерь ĕçне йĕркелессинче тата ăна ертсе пырассинче вара Москакасси шкулĕн ертӳçи маттуртарах пулчĕ.

Паллах, пурин ятне те палăртма çук. Çапах та эпĕ вĕрентӳпе çамрăксен политикин физкультурăпа спорт пайĕ ячĕпе пур вĕренекенсемпе вĕрентекенсене те Тыр-пул уявĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп. Ял хуçалăхĕсен, шкулсен пӳлмисем туллипулнинче сирĕн тӳпе те питĕ пысăк.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ачасем купăста калчи лартнă самант.**

## ТИК информирует

# С 17 октября начата выдача открепительных удостоверений

В соответствии с Федеральным законом "О выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации" Центральная избирательная комиссия России изготовила и направила в регионы открепительные удостоверения. ЦИК ЧР получила 60 тысяч открепительных удостоверений для избирателей, которые по разным причинам не смогут прибыть в день голосования 2 декабря на свой избирательный участок, где они включены в списки избирателей. Моргаушской территориальной комиссией получено 2 тысячи открепительных удостоверений.

Избиратель, который в день голосования не сможет прибыть на свой избирательный участок, вправе получить открепительное удостоверение с 17 октября по 11 ноября в территориальной избирательной комиссии, либо с 12 ноября по 1 декабря включительно в участковой избирательной комиссии по месту основной регистрации.

Территориальная избирательная комиссия расположена в здании администрации Моргаушского района в каб. 307. Работает с 8 часов до 17 часов в рабочие дни, в субботу – с 8 часов до 13 часов.

**Заместитель председателя ТИК Л.Ю. ТАРАСОВА.**

## Спорт хыпарĕсем

# Ырă пуçару

Шетмĕпуç ял тăрăхне кĕрекен Тивĕш ялĕн шкулĕнче час-часах спорт ăмăртăвĕсем иртеççĕ. Акă кăçалхи октябрĕн 14-мĕшĕнче Тивĕш шкулĕн стадионĕнче Болеслав Иванович Павлова асăнса Виталий Иванович Павловăн парнисене çĕнсе илессишĕн тĕрлĕ районсен командисем хушшинче футболла вылясси пе усă турнир иртрĕ.

Асăннă спорт мероприятине ирттересси 2000 çултанпа ырă йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Виталий Павлов чи çывăх тăванĕн сăнарне халăх асăнче хăварас тĕллевпе унăн ячĕпе кашни çулах футбол турнирĕ йĕркелет.

Ахăртнех, пурăннă пулсан Б. Павлов спорта, сывă пурнăç йĕркине аталантарассишĕн чылай ырă ĕç тăватчĕ пулĕ. Пурăннă пулсан... Шел, Муркаш районĕнчи Автанкасси ялĕнче çуралса ӳснĕскер, пурнăçран çав тери ир уйрăлнă...

Кашни çулах çак турнирта 7-9 команда вăй виçнĕ пулсан, çанталăк условийĕсене кура кăçал 4 команда кĕрешĕве тухрĕ.

Турнира уçма хутшăннă сумлă хăнасем Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов, Тивĕш шкулĕн директорĕ В.А. Федотова, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн ертӳçи Н.П. Александров, В. Егорова ячĕллĕ спортшкулăн аслă тренерĕ В. Киселев футболистсене ырлăх-сывлăх, вăйхал çĕнтерӳ сунчĕç.

Хĕрӳ тупăшу хыççăн пĕрремĕш вырăна "Рябинка" микрорайон команди (Шупашкар хули), иккĕмĕш вырăна "Рябинка II", виççĕмĕш вырăна "Динамо" команда (Шупашкр хули) çĕнсе илчĕç, хаклă парнесене тивĕçрĕç.

Шетмĕпуç ял тăрăхĕн команди те хăйне тивĕçлĕ шайра кăтартрĕ.

Турнир пуçаруçи (вăлах спонсорĕ те) В. Павлов вара çитес çул командăсен йышĕ ӳсессе, çамрăк вăйăçсем ытларах хутшăнасса шанать.

**Е. ИЛЬИНА, Тивĕшри тĕслĕх библиотека ĕçченĕ.**

## Ĕç саккунĕпе

# Сĕт вырăнне укçа илме юрать

Сиенлĕ производствăра вăй хуракансене ку таранччен сĕт панă. Ку енĕпе халĕ улшăнусем пулчĕç. Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнче йышăннă "РФ Ĕç кодексĕн 222 статйине улшăнусем кĕртесси çинчен" 224 № Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн октябрĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа сиенлĕ производствăра вăй хуракансем сĕт е çавăн йышши ытти çимĕç вырăнне укçан компенсаци илме пултараççĕ. Çапла тума заявлени çырмалла. Паллах, кун пирки Ĕç договорĕнче е Коллективлă договорта каланă пулсан.

Ку таранччен тӳлевсĕр сĕте ĕçлекенсене пĕр сменăшăн 0,5 литр панă.

**А. КУЗЬМИН, социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçин çумĕ.**

## Çĕнĕ кĕнекепе паллашар

# Вĕçсĕр-хĕрсĕр илемлĕх тĕнчи

Халăх йăли-йĕркине, творчествине кăмăллакансем валли юпа уйăхĕнче çĕнĕ кĕнеке кун çути курчĕ. Ăна пирĕн ентеш Петр Мазуркинпа Геннадий Иванов-Орков хайланă.

Кĕнекен пĕрремĕш страницинченех авалхи илемлĕх тĕнчи уçăлать. Унта килçуртра, хушма-хуçалăхра усă курмалли япаласене, тĕрлĕ туратсемпе илемлетнĕ портретсене, панносене авалхи меслетпе йывăç çинче касса эрешленине сăнланă. Кĕнекене тĕрлĕрен илемлетни вара кĕçĕн çулхисене те, аслă ăрурисене те хăй çумнелле йыхравлать. Ăна тытсанах вăрман уçланкине лекнĕн туйăнать. Яш çулхи П. Мазуркина аслашшĕ-кĕтӳç шĕшкĕ вуллине тата çăкаран шăхличĕ касма вĕрентнине сăнланă. Çулсем кайнăçем вара эрешсем чăн-чăн илемлĕх тĕнчи пулса тăнă.

Чăваш патшалăх илемлĕх музейĕн наукăн аслă сотрудникĕ Г.Н. Иванов-Орков çырнă статйисене вуланă май Петр Мазуркин творчество мастерскойĕн алăкĕ ерипен уçăлать. Кунта вара вăл чăн-чăн талант пулни яр уççăн палăрать. Кĕнекене П. Мазуркин автор патĕнче тата кĕнеке лавккисенче туянма пулать. Кĕнекен тата вăл ăсталанă япаласен куравĕн презентацине чӳк уйăхĕнче Мăн Сĕнтĕр библиотекинче ирттерме палăртнă.

**С. СОКОЛОВА, библиотека ертӳçи.**






## Пĕлтерӳсем. Объявления


**КПКГ «Агрокредит» выдает краткосрочные займы, принимаем сбережения.**
**Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 23.**
**Телефон: 2-18-13. 4-10.**

**Продаю: доски хвойные, березовые, брус, подтоварник, штакетник, дрова-обрезки (дешево).**
**Тел.: 8-905-345-31-09. 3-5.**

**ЗАО МСО «Моргаушская»**
**Реализует цемент, песок строительный, раствор, бетон, керамзитобетонные блоки. Предоставляет транспортные услуги.**
**Приглашает принять долевое участие в строительстве 36-квартирного жилого дома в д. Москакасы Моргаушского района. Стоимость 1 кв. м. общей площади – 19000 рублей.**
**Принимает на работу каменщиков, электриков, плотников. Своевременная оплата. Тел.: 32-2-23, 2-21-29. 3-3.**

**Компьютеры от 10000 рублей и спутниковое телевидение от 4500 рублей. Тел.: 48-30-63. 2-4.**

**ООО «Виктория плюс» приглашает на постоянную работу бухгалтера, экономиста. Тел.: 8-903-346-37-42. 2-2.**


Коллектив МУП ЖКХ «Моргаушское» выражает глубокое соболезнование оператору очистных сооружений Журавлевой А.Т. в связи кончиной
**МУЖА.**

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Зоя Ивановна ДИМИТРИЕВА**
пенсионерка, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Нискассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул коллективĕ çак шкулта директорăн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн Р.В. Семенован пиччĕшĕ
**Юрий Васильевич ОСИПОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 2,0 п. листа. Тираж 3480.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 19.10.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.